27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
СЕНТЯБРЬ
29
ЭРНЕКУН
192(6687) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

Ĕçхалăх депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсене ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, тырпул пухса кĕртес ĕçре тухăçлă ĕçленĕшĕн ял хуçалăхĕнче малта пыраканнисем республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

Канаш районĕ тăрăх:

33. Доронин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Филиппов юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Кузьмин юлташ). Ку колхоз 558 гектар çинчи тырра вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр вырса пĕтерсе капана хывнă. Кĕрхи тырăсене акмалли государство планне 105 процент тултарнă, тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă. Государствăна тырра срокчен парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 250 центнер парса хунă.

34. «Красная звезда» колхоз (председателĕ Ернцов юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Ингина юлташ). Çак колхоз 326 гектар çинчи тырра вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр вырса пĕтерсе капана хывнă. Кĕрхи тырăсене акмалли плана 108 процент тултарнă, тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă. Государствăна тырра срокчен парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 180 центнер парса хунă.

35. «Третья пятилетка» колхоз (председателĕ Лукина юлташ, пуçламĕш комсомол организацийĕн секретарĕ Яковлева юлташ). Колхоз 362 гектар çинчи тырра вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр вырса пĕтерсе капана хывнă. Кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, плана 110 процент тултарнă. Государствăна тырра срокчен парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 470 центнер парса хунă.

МТС ĕçленĕшĕн вăхăтра тӳлесе татмалла

Хĕрлĕ Çарăн фронтри чаплă çĕнтерĕвĕсемпе колхозниксемпе колхозницăсем, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, чĕререн савăнаççĕ. Çав çĕнтерӳсем пире ĕçре вăй-хăват параççĕ, колхозниксен ĕçлес кăмăлне ӳстереççĕ. Колхозсенче халĕ кунĕн-çĕрĕн хĕрӳллĕ ĕç пырать.

Анса пулнă тырпула пĕтĕмпех пухса кĕртсе, государствăпа фронта ытларах тырпул, апат-çимĕç парасси колхозсен чи ответлă та чыслă задачи пулса тăрать. Çак задачăна ăнăçлăн пурнăçланă колхозсем пирĕн халĕ çĕршерĕн шутланаççĕ. Вăрнар. Шупашкар районĕсенчи колхозсем обязательствăсем тăрăх государствăна тырă парса татрĕç. Çĕрпӳ, Сĕнтĕр, Ишлей, Чурачăк тата ытти хăшпĕр районсем государствăна тырă парас ĕçе çак кунсенчех вĕçлеççĕ.

Нумай колхозсем аванс шучĕпе 1945 çулшăн тырă пама тытăнчĕç. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз 1945 çулшăн 3 000 пăт, Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз 2000 пăт панă. Ун пек колхозсем республикăра сахал мар.

Государствăна обязательствăсем тăрăх тырă панипе пĕрлех МТС счечĕсем тăрăх натуроплата та тӳлемелле. Натуроплата— МТС-сен машинисемпе ĕçленĕшĕн тӳлемелли парăм. Çав тырă пĕтĕмпех государство аллине каять.

Малта пыракан колхозсем çав парăма государствăна обязательствăсем тăрăх тырă панă чухнех парса татаççĕ. Сăмахран, Вăрнар, Куславкка, Сĕнтĕр районĕсенчи колхозсем натуроплата тӳлес енĕпе те малта пыраççĕ. Вăрнар районĕнчи колхозсем сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлнех натуроплатăна 94,4 процент чухлĕ панă.

Анчах та республикăра натуроплата тӳлесси питех те çителĕксĕр пырать-ха. Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне республикăри колхозсем натуроплата тӳлемелли плана пурĕ те 47,3 процент кăна тултарнă. Натуроплата тӳлесси Кувакино, Шăмăршă, Чкаловски, Хĕрлĕ Чутай, Комсомольски тата ытти хăшпĕр районсенче уйрăмах начар пырать. Çав районсенче натуроплата планне 10 процентран пуçласа 30 процент таран кăна тултарнă.

Колхозсем МТС ĕçленĕшĕн вăхăтра парса татасси МТС-сенчен те нумай килет. МТС-сем хăйсем ĕçленĕшĕн мĕн чухлĕ тивнине çинчен колхозсене вăхăтра пĕлтермелле. Анчах уйрăм МТС-сем çакна тивĕçлипе тумаççĕ-ха. Вăрмар МТС-ĕ ĕçленĕшĕн районри колхозсем государствăна 1084 тонна тырă памалла, МТС вара пурĕ те 896 тонна тӳлемелли çинчен кăна счет тăратнă. Елчĕк МТС-ĕ 1606 тоннăлăх ĕçленĕ, счетне вара пурĕ те 1200 тоннăшăн кăна тăратнă. Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕн машинисемпе ĕçленĕшĕн районри колхозсем 333 тонна памалла, анчах кунта вара çак вăхăта çитсе колхозсен 283 тонна тӳлемелли çинчен кăна пĕлтернĕ. Çапла ĕнтĕ Сĕнтĕрвăрри тата ытти хăшпĕр МТС-сем натуроплатăна тӳлес ĕçе хăйсем чăрмантарса тăраççĕ. Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕн руководителĕсем çаврăнăçусăррине пула, районри колхозсем паянхи кун тĕлне натуроплата тӳлемелли плана пурĕ те 25 процент кăна тултарнă.

МТС хăйĕн машинисемпе ĕçленĕшĕн колхозсене счетсем тăратас ĕçе тăсса пыни сиенлĕ пулни пуриншĕн те паллă. Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районсенчи уполномоченнăйĕсен натуроплатăна колхозсем мĕнле тӳлесе пынине контроллесе тăмалла. Иртнĕ çул Комсомольски, Чкаловски тата ытти хăшпĕр районсенчи колхозсем натуроплатăна вăхăтра парса татманни Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн çав районсенчи уполномоченнăйĕсем ку ĕçе вăхăтра контроллесе тăманнинчен те килнĕ. Комсомольски районри «Янга Турмыш», Калинин ячĕпе тăракан колхозсем 1943 çулта МТС-сем ĕçленĕшĕн памалли тырра халĕ те парса татман. Иртнĕ çулхи йăнăшсене кăçал тумалла мар, натуроплата тырри пĕтĕмпех вăхăтра государство аллине кĕмелле. Натуроплата тырри — государство тырри. Çакна кашни колхоз руководителĕн çирĕп асра тытмалла.

Халĕ вăрçă пырать. Государствăна вăрçă вăхăтĕнче тырă хĕçпăшал пекех кирлĕ. Хĕçпăшалсăр тăшмана çĕнтереймĕн, çавăн пекех тырпулсăр та тăшмана çĕнтерме çук.

Çанталăк уяр тăнă чухне кашни колхозăнах натуроплатăна парса татмалла.

ВКП(б) райкомĕсен, райсовет исполкомĕсен, Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районсенчи Уполномоченнăйĕсен, мĕнпур коммунистсен, партире тăман большевиксен натуроплата тыррине парса татас ĕçе тимлĕн организацилес пулать. Натуроплата парас ĕç мĕнле пынине куллен тĕрĕслесе тăмалла. Колхозри транспорт бригадисен натуроплата тыррине леçнĕ çĕрте, государствăна обязательство тăрăх тырă панă чухнехи пекех, кăнтăрла та, çĕрле те ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле.

Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассишĕн, паттăр Хĕрлĕ Çара татах та вăйлăнрах пулăшассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсен те, анса пулнă тырпула вăхăтра пухса кĕртсе, государство умĕнчи пур тĕрлĕ парăмсене те вăхăтра парса татассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

И. Т. Братчиков юлташа Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

Иван Тихонович Братчиков юлташа Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи сентябрĕн 27-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

А. И. Воронцова юлташа Чăваш АССР Социальнăй Обеспечени Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

Анна Ивановна Воронцова юлташа Чăваш АССР Социальнăй Обеспечени Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи сентябрĕн 27-мĕшĕ.

Кĕрхи çĕртме—килес çулхи вăйлă тырпул никĕсĕ

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва вăйлатса пырса, кĕрхи çĕртме тумалли плана кашни колхоз, кашни район тăрăх тултарар!

РЕСПУБЛИКĂРИ РАЙОНСЕНЧЕ ТЫРПУЛСЕНЕ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇ СЕНТЯБРĔН 25-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Кĕлте турттарса капана хывнă	Авăн çапнă	Çĕрулми кăларнă	Вăрăхлăх акнă курăксене пухса кĕртнĕ
Улатăр	74,4	51,3	5,2	44,5
Элĕк	84,9	68,6	61,9	67,9
Вăрнар	97,2	62,2	29,0	91,8
Йĕпреç	79,3	57,7	7,1	38,0
Ишлей	81,6	61,3	7,2	100,0
Калинино	98,5	59,3	48,6	100,0
Канаш	88,8	67,0	60,4	99,2
Куславкка	82,8	58,8	18,1	100,0
Комсомольски	82,6	48,8	24,6	91,6
Хĕрлĕ Чутай	80,2	46,9	55,0	81,8
Красноармейски	99,0	63,7	40,1	100,0
Кувакино	82,9	56,7	13,9	30,0
Сĕнтĕрвăрри	94,5	66,0	37,0	95,5
Муркаш	91,6	58,0	14,5	86,8
Октябрьски	93,5	54,4	16,4	100,0
Первомайски	75,4	54,7	59,7	28,0
Пăрачкав	99,7	72,2	15,3	88,1
Советски	94,3	69,0	27,2	100,0
Сĕнтĕр	90,5	69,0	48,4	97,6
Вăрмар	89,9	57,3	15,0	100,0
Çĕрпӳ	93,2	68,3	78,5	100,0
Шупашкар	97,0	63,5	33,5	100,0
Чкаловски	84,6	42,1	55,9	100,0
Чурачăк	100,0	69,3	97,8	93,7
Шăмăршă	84,1	59,6	70,0	69,0
Шăхасан	92,0	66,9	35,7	97,3
Çĕмĕрле	80,5	59,9	49,6	58,0
Етĕрне	92,1	52,0	28,7	100,0
Елчĕк	92,4	52,5	41,8	100,0
Тăвай	77,9	47,0	10,3	97,8
Республика тăрăх	89,4	59,2	35,7	88,9

Ĕçри хастарлăх

ОКТЯБРЬСКОЕ. Уйпилемечри «Опыт» колхоз членĕсем сентябрĕн 11-мĕшĕ тĕлне хăйсен уйхирĕнчен кĕлтесене пĕтĕмĕшпех пухса кĕртрĕç. Çак ĕçре В. Александровпа Т. Захарова колхозниксем чапа тухрĕç. Вĕсем çĕрле те кăнтăрлахи пекех ĕçлерĕç, кулленхи нормăна 2—3 хут ирттерсе тултарса пычĕç. Турттарнă кĕлтене вăхăтра капана хывас пулать. Çак ĕçре 60 çултан иртнĕ Петр Юнусовпа Никита Юнусов стариксем кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлерĕç.

Колхозăн çапмалли тепĕр 61 гектар тырри юлнă. Уйпилемечсем çак ĕçе октябрĕн 15-шне вĕçлеме шутлаççĕ. Техникăллă культурăсенчен клевера (1,50 гектар) çапса шĕкĕлчесе, амбара кĕртсе хунă.

Кĕрхи çĕртме тăвассине 100 процентпех пурнăçланă. Çак ĕçре çамрăк колхозниксем И. Сергеев, В. Степанов, Г. Александров, А. Семенов лайăх ĕçлерĕç.

Халĕ колхоз хăмла татать.

— Хăмла та хаклă чĕр-тавар, вăл государствăна кирлĕ. Çавăнпа та ăна вăхăтра пуçтаратпăр. Татнине типĕтсе, государствăна парсах тăратпăр, — тет колхоз председателĕ В. Памиков юлташ.

Хăмла хыççăн çĕрулми кăларма тытăнчĕç. Малтанхи çĕрулмине государствăна параççĕ. Çĕрулми турттарма 56 корзина çĕнĕрен илнĕ, лашасем тĕреклĕ, урапасем çителĕклĕ те юсавлă. Çĕрулмине вăрлăхлăх уйăрса хума подвал хатĕр. Пахча-çимĕçсене хĕл каçарма хранилище юсанă.

И. АНДРЕЕВ.

Октябрь уявне çитĕнӳсемпе кĕтсе илетпĕр

Пирĕн Сталин ячĕпе тăракан колхозăн кăçал 385 гектар çинчи тырпула пуçтарса кĕртмелле. Эпир çак ĕçе вăхăтра тата лайăх пурнăçа кĕртес тесе, кашни колхознике уйрăм участоксем çирĕплетсе патăмăр. Çапла вара кашни колхозник пĕтĕмпе 4,5-шер гектар тырă вырчĕ. Тырпула эпир 12 кунта вырса пĕтертĕмĕр. Тырă вырма тухсан 5 кунтан авăн çапма тытăнтăмăр. Тырă вырса пĕтерсенех, кĕлте кӳме пуçларăмăр та 7 кун хушшинче пĕтĕмĕшпех кӳрсе пĕтертĕмĕр. Кĕлте кӳнĕ вăхăтра та авăн çапас ĕçе сӳрĕклетмен. МТС-ăн молотилкипе куллен 18 гектар çинчи тырра çапнă, авăн çапас ĕçе каçхине те, кăнтăрла та пĕр чарăнмасăр туса пынă. Кунта пĕтĕмпе 45 çын хутшăннă. Вĕсене икĕ сменăпа ĕçлеттерсе, сентябрĕн 21-мĕшĕ тĕлне тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсене пĕтĕмпех çапса пĕтертĕмĕр.

Иртнĕ çулсенче пирĕн колхоз районри начар ĕçлекен колхозсенчен пĕри шутланнă. Кăçал пур ĕçсене те вăхăтра туса пыратпăр. Ĕçĕн ăнăçлăхне, тĕпрен илсен, сдельщинăна тĕрĕс пурнăçласа пыни тата колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе лайăх йĕркелени татса пачĕ. Нумай колхозниксем, ăмăртăва хутшăнса ĕçлесе, куллен кун çитĕнӳсем туса пыраççĕ. Анисия Николаева, Раиса Михайлова, Мария Петрова, Мария Дмитриева, Мария Иванова, Александра Ефимова тата ыттисем те — пĕтĕмпе 22 колхозница ĕç нормисене яланах ирттерсе тултарнă. Вĕсене пурне те ĕçшĕн хушса тӳленĕ.

Халĕ колхозниксем çĕрулми кăлараççĕ, кантăр çапаççĕ, 58 гектар çинчи çĕрулмине çак кунсенчех кăларса пĕтеретпĕр.

Çĕршывпа фронт валли тырă та боеприпассем пекех кирлĕ. Пирĕн колхозниксем çавна лайăх ăнланаççĕ. Государствăна тырă памалли обязательствăна эпир пĕтĕмĕшпех пурнăçларăмăр.

Хамăр ĕçсем çинчен тата çакна калас килет. Колхозри учет ĕçĕ чи лайăх вырăнта пулмалла. Пирĕн колхозăн счетоводчĕ фронтовик-орденоносец Александр Викторов хăйĕн ĕçне тĕрĕс туса пырать. Вăл кашни колхозникĕн ĕçне тĕрĕс шута илет. Халь вăл колхозниксем кăçалхи ялхуçалăх çулĕнче мĕн чухлĕ ĕçкунĕ тунине шутласа хучĕ.

Ялхуçалăх çулне вĕçлес кунсем çывхарса çитрĕç. Кăçалхи ĕçсене ăнăçлă вĕçлессишĕн тăрăшнипе пĕрлех çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешессине те манса хăвармастпăр.

Кĕрхи çĕртме — вăйлă тырпул никĕсĕ. Пирĕн колхозăн кашни бригадиех хăйĕн участокĕ çинче кĕрхи çĕртме туса хăварма тăрăшать. Паянхи кун тĕлне пурĕ 25 гектар сухаланă. Çĕртмере кашни кун 16 лаша ĕçлет. Халĕ ĕнтĕ колхозри мĕнпур туртăм вăйне кĕрхи çĕртме тума яратпăр. Колхозра вăрлăх, страховка тата ытти фондсене уйăратпăр. Ун хыççăн тупăша ĕçкунĕсем тăрăх колхозниксене валеççе паратпăр. Кăçал тырпул начар мар тухрĕ, кашни ĕçкунĕ çине икшер килограмм ытларах тĕштырă тата пахча-çимĕçсем чылай валеçме шутлатпăр.

Октябрь уявне государство умĕнчи пĕтĕм обязательствăсене пурнăçа кĕртнипе кĕтсе илетпĕр.

В. АНДРЕЕВА,
Красноармейски районри Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Килес çулхи вăйлă тырпулшăн

СЕНТЕР, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Колхозсем тырпулсене пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçсене вĕçлесе пынă май, кĕрхи çĕртме тума пуçăнчĕç. Паянхи кун тĕлне пурĕ 2542 гектар ытла сухаласа, плана 30 процент ытла тултарнă.

Çитес çулхи тухăçлă тырпулшăн тăрăшакан колхозсем кĕрхи çĕртме тумалли плана ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхоз, тепĕр 13 гектар сухаласан, кĕрхи çĕртме тумалли плана тултарать. «Смычка» колхоз ку енĕпе плана 70 процент, «Прожектор» колхоз 65 процент пурнăçланă. «Безбожник», «Марксист» колхозсем çак кунсенчех кĕрхи çĕртме туса пĕтереççĕ. «Аврора» колхоз кĕрхи çĕртме 50 процент ытла тунă. Çак колхозсенче кĕрхи çĕртме тăвас ĕç ăнăçлă пыни, чăн малтанах, туртăм вăйĕпе тĕрĕс усă курнинчен килет.

Анчах та районри чылай колхозсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе кирлĕ пек хакламаççĕ. «Сеялка», «Канаш», «Родина», «Коммунар» колхозсем кĕрхи çĕртме тума тытăнман та. «Будильник» колхоз тырăсене вăхăтра вырса пуçтарчĕ. Кунта кĕрхи çĕртме ĕçне пуçăнма пур майсем те çителĕклĕ. Апла пулсан та, тĕрлĕ сăлтавсем çине ярса, ку ĕçе тăсса пыраççĕ. «Родина» колхозра (председателĕ Дублев юлташ) çĕртме тума лашасем çителĕклĕ уйăрман, çавна пула графика тултарса пыраймаççĕ.

Районри нумай колхозсем çĕршыв умĕнчи пĕрремĕш тивĕçе—государствăна тырă парассине пурнăçларĕç. Халĕ ĕнтĕ пĕтĕм вăя авăн çапнă тата çĕртме тунă çĕре ямалла. Çак ответлă ĕçсене чыслăн пурнăçлассишĕн, килес çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн колхозниксемпе колхозницăсен ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле.

И. ЕФРЕМОВ.
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Çамрăк сухаçăсемпе трактористсен республикăри ăмăртăвĕ

ВЛКСМ Обкомĕпе Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ кĕрхи çĕртме тунă çĕрте ĕçлекен çамрăк сухаçăсемпе трактористсен республикăри ăмăртăвне организацилеме йышăннă.

Октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне икĕ касăллă плугпа 32 гектартан кая мар, пĕр касăллă плугпа 20 гектартан кая мар сухаланă сухаçăсене ăмăртура мала тухнă тесе шутлаççĕ. Çак ĕçе тунă чухне туртăм вăйне лайăх упраса хăвармалла, агротехника правилисене пăсмалла мар. Ăмăртура мала тухнă çамрăк колхозниксемпе трактористсене «Районри чи лайăх çамрăк сухаçă», «Районри чи лайăх çамрăк тракторист» ятне параççĕ тата Хисеплĕ грамотăсемпе наградăлама тăратаççĕ. Ӳнсăр пуçне, малта пыракан трактористсемпе сухаçăсене премилеме 12 преми тунă. Комсомолăн кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе лайăх организациленĕ пуçламĕш организацийĕсен тата ВЛКСМ райкомĕсен секретарĕсене пама 10 преми тунă, кашни премийĕ 500-шер тенкĕлĕх пулать.

Ăмăрту итогĕсене 5 кунта пĕрре туса тăраççĕ.

РЕСПУБЛИКĂРИ РАЙОНСЕНЧЕ КĔРХИ ÇĔРТМЕ ТĂВАС ĔÇ СЕНТЯБРĔН 25-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
(процентпа)

Районсем	Плана мĕн чухлĕ тултарнă
Чурачăк	68,2
Элĕк	48,6
Красноармейски	46,7
Çĕрпӳ	46,5
Октябрьски	44,7
Ишлей	44,5
Муркаш	43,4
Сĕнтĕрвăрри	41,6
Шупашкар	40,5
Калинино	40,1
Куславкка	37,7
Сĕнтĕр	35,8
Вăрмар	34,2
Етĕрне	26,7
Канаш	26,3
Шăхасан	25,8
Елчĕк	21,6
Советски	21,1
Вăрнар	20,8
Чкаловски	13,8
Шăмăршă	12,3
Комсомольски	11,6
Йĕпреç	9,8
Улатăр	9,8
Хĕрлĕ Чутай	8,7
Çĕмĕрле	7,9
Первомайски	6,7
Пăрачкав	3,8
Кувакино	2,6
Тăвай	1,3

* * *

Тухăçлă тырпул туса илес ĕçре кĕрхи çĕртме пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен ĕнентерме кирлĕ те мар. Кĕрхи çĕртмене вăхăтра тата лайăх туни уйхирсене çумкурăксенчен тасатма, тăпрара нӳрлĕх ытларах тытса хăварма, çураки ĕçĕсене хăвăрт туса иртерме май парать. Çаксем пурте тырпул тухăçлăхне ӳстерме пулăшаççĕ.

Çакăн çинчен ялхуçалăхĕнчи кашни работник пĕлсе тăрать. Апла пулин те, республикăра кĕрхи çĕртме тăвас ĕç тӳсме çук сӳрĕк пырать. Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне кĕрхи çĕртме тумалли плана пурĕ те 26,5 процент çеç тултарнă. Иртнĕ пилĕк кун хушшинче 15.000 гектар сухаланă. Ку вăл планăн 6,5 проценчĕ кăна пулать.

Кĕрхи çĕртме тумалли графика пĕр район та пурнăçа кĕртмен. Уйрăмăнах ку ĕç Тăвай, Первомайски, Çĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай, Улатăр, Йĕпреç тата ытти районсенче начар пырать. Асăннă районсен руководителĕсем кĕрхи çĕртме тумалли плана тултарассишĕн тăрăшмаççĕ, колхоз председателĕсене çак ĕçре васкатмаççĕ. Мĕн калассн пур ĕнтĕ пĕр эрне хушшинче те кĕрхи çĕртме сухине 100 гектар кăна тунă Тăвай районĕн руководителĕсем çинчен?

— Халĕ çанталăк лайăх тăрать-ха, кĕрхи çĕртме тума ĕлкĕретпĕр, — теççĕ хăшпĕр çаврăнăçусăр руководительсем. Çапла вĕсем çĕртме тумалли чи лайăх вăхăта сая яраççĕ. Кайран вара, кĕрхи çумăрсем пуçлансан, штурмлама пуçлаççĕ, анчах сухатнă вăхăта витме йывăр пулать.

Республикăри малта пыракан колхозсем кĕрхи çĕртме тумалли плана ăнăçлăн пурнăçа кĕртме çителĕклĕ условисем пуррине кăтартса параççĕ.

Кĕрхи çĕртме тумалли плана кашни колхозра пĕтĕмĕшпех тултармалла тăвас пулать. Çитес çулхи тырпулăн ăнăçлăхĕ çакна пурнăçа кĕртнинчен килет те ĕнтĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 26-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Сентябрĕн 26-мĕшĕнче пирĕн çарсем ТАЛЛИН хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Эстони хĕвеланăç сыранне тăшманăн пĕр-пĕринчен уйрăлса кайнă ушкăнĕсенчен тасатса пынă, халăх пурăнакан 200 пункта ытла йышăннă, вăл шутра КЛОГАРАНД, КУРКСЕ, АЛЛИКЛЕТА, РОЗЛЕПА, НИННАМЯЭ, РИДАЛА, ТУРУ, ПУЙСЕ, ХАЭСКА, МАРКНА, СИЛЛА, ЛАЙККЮЛЬ, МИХКЛИ ятлă пысăк ялсем тата РИЗИПЕРЕ, ЭЛЛАМА, РИСТИ, ТАЭБЛА, НАЛИВЕРЕ, ВИГАЛА, РОТСИ ятлă чугун çул станцийĕсем.

РИГА хули енче пирĕн çарсем, наступление вăйлатса пырса, АЙНАЖИ, САЛАЦГРИВА, АЛОЯ, ЛИМБАЖИ, ЦЕСИС хулисене туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 300 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — СЛИЦИЭМС, АСТЭРЕ, УМУРГА, СТАЛБЕ, АУЦИЭНС, СЕРМУКШИ, ЯЛЫПИЛС, МАДЛИЕНА ятлă пысăк ялсем тата АЛОЯ, АУСЕКЛИС, ПУЛПЕДЕ, ПАЛЕ, СТАЙЦЕЛЕ, ЗЕНЕПЕ, АЙНАЖИ, ЦЕСИС, РАМУЛИ, АМАТА ятлă чугун çул станцийĕсем.

САНОК хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере тата унăн сăртлă-вăрманлă вырăнти инженери чăрмавĕсене çĕмĕре-çĕмĕре, Дрогобыч облаçĕнчи ТУРКА ятлă район центрĕпе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата РАДОШИЦЕ, ОСЛАВИЦА, СМОЛЬНИК, ПАРЫНЬСКЕ, ДОРОЖКИ, ДЫДЕВА, БОБЕРКИ, ЯСЕНИЦА ЗАМКОВА, ЯВОРА ятлă ялсене йышăннă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Сентябрĕн 25-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 48 самолетне персе ӳкернĕ.

СЕНТЯБРĔН 27-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Сентябрĕн 27-мĕшĕнче пирĕн çарсем ПЯРНУ (ПЕРНОВ) хулинчен хĕвеланăçнерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Эстонин хĕвеланăç сыранне тăшманăн пĕр-пĕринчен татăлса кайнă ушкăнĕсенчен тасатассишĕн çапăçнă. Пирĕн çарсем ВОРМСИ САР çурутравне йышăннă.

РИГА хули енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 200 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра —СКРОДЭЛИ, ДУКТЭ, СКУЛТЕ, ЗИЕДЫНИ, ВИДРИЖИ, СТРАУПЕ, ЛИГАТИЕ, НИАЛУРЕ, ГАРШАС, ВАТРАНЭ, ТЫМСНИ, КАЙБАЛА ятлă пысăк ялсем тата ЛАДЕ, ИНТЭН, СКУЛТЕ, НЕРИТИ, ЛИГАТНЕ, ЮМПРАВА, КАЙБАЛА, БАТРАНЭ ятлă чугун çул станцийĕсем.

САНОК хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем хытă çапăçнă хыççăн сăртлă-вăрманлă темиçе ял туртса илнĕ, вăл шутра — ЩЕРБАНУВКА, ЗУБРАЧЕ, РОСТОКИ ГУРНЕ, УСТШИКИ ГУРНЕ, ВОЛОСАТЕ, ГАРНАВА, ИЛЬНИК ятлă пысăк ялсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Сентябрĕн 26-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 10 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 7 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Рига хули енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Кӳлĕсемпе шывсем тăрăх çирĕпленсе ларнă тăшман хытă хирĕç тăрса çапăçнă. Совет пехотинецĕсем, артиллеристсем пулăшнипе, кӳлĕсем хушшинчи вырăнсене татса кĕрсе кайнă. Пĕр соединени чаçĕсем, тăшмана хăваласа пырса, хĕвеланăçнелле 20 километр кайнă, сарлака фронтпа Рига заливĕ хĕррине тухнă. Унтан кăнтăр еннелле наступлени туса пырса, пирĕн çарсем халăх пурăнакан чылай пунктсене туртса илнĕ, вăл шутра —Рига хулинчен 35 километрта ларакан Скулте ялĕ. Çав халăх пурăнакан пунктсемшĕн пынă çапăçусенче гитлеровецсене икĕ батальон пĕтерсе тăкнă. 16 тупă, 6 бронетранспортер тата çар хатĕрĕсем тиенĕ автомашинăсем нумай тытса илнĕ. 300 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Пирĕн Псков хулипе Рига хули хушшинчи шоссе çулĕ тăрăх наступлени туса пыракан çарсем ĕнер Цесис хулине туртса илнĕ хыççăн пĕр чарăнса тăмасăрах Аната шывĕ урлă каçса кайнă. Çитĕнĕве вăйлатса пырса, пирĕн чаçсем Лигатне чугун çул станцийĕнче тăшман гарнизонне аркатса тăкнă. Нимĕçсен бронепоездне пĕтерсе тăкнă. Чугунçул эшелонĕ, икĕ боеприпас склачĕ, минометсем, пулеметсем тата огнеметсем нумай тытса илнĕ.

Рига хулинчен хĕвелтухăçнерехре совет чаçĕсем, тăшман контратакисене сире-сире ярса, çаплах малалла куçса пынă. Пирĕн стрелковăй подразделенисем гитлеровецсене Ватранэ чугун çул станцийĕнчен хĕссе кăларнă. Хĕвеланăç Двина шывĕн çурçĕр хĕрри тăрăх наступлени туса пыракан совет çарĕсем 15 километр малалла кайнă. Ригăран 50 километрта ларакан Кайбала ятлă чугун çул станцине туртса илнĕ. Ку участокра пулса иртнĕ çапăçусенче 600 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 7 танк тата ытти трофейсем те тытса илнĕ. Тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем каласа панă тăрăх, Балтика тăрăхĕнчи çапăçусенче нимĕç çарĕсем питĕ пысăк çухату тӳснĕ. Çапăçусенче пулнă дивизисен пурин те йывăр хĕçпăшалсем пĕтнĕ. Пысăк çухатусем тӳснине пула, малти линие нимĕçсем хăйсен юлашки резервĕсене яраççĕ. Çак кунсенче авиаци шкулĕсенчен вĕренсе тухнă 1.500 летчик пырса çитнĕ. Çав летчиксене пурне те пехота чаçĕсене янă.

* * *

Санок хулинчен кăнтăртарахра пĕр соединени чаçĕсем çапăçса малалла куçнă. Тăшман тусем çинче лайăх позицисем йышăнса çирĕпленсе ларнă та хытă хирĕç тăрса çапăçнă. Совет боецĕсем Ростоки Гурне ялĕпе ытти темиçе яла çавăрса илнĕ те вĕсене пурне те йышăннă. Санок хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем нимĕçсемпе венгерсен çарĕсемпе хаяррăн çапăçнă, 10 километр малалла кайнă, тăшманăн Польшăпа Чехословаки чиккинчи вăйлă çирĕплетнĕ опорнăй пункчĕ пулса тăракан Волосате ялне туртса илнĕ. Çапăçу хирĕнче гитлеровецсен темиçе çĕр вилли выртса юлнă. Нимĕçсенчен 12 тупăпа миномет, 37 пулемет, 6 артиллери склачĕ тата 4 апат-çимĕç склачĕ тытса илнĕ. 230 гитлеровеца тыткăна илнĕ. Турка хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем Стрый шывĕ урлă каçнă та Ильник ялне туртса илнĕ.

* * *

Марнамполь хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре кăнтăрла иртсен пирĕн разведка отрячĕсем тăшмана малтанхи линири траншейăсенчен хĕссе кăларнă та çирĕплетнĕ икĕ çӳллĕ вырăна туртса илнĕ. Çав позицисене каялла туртса илме хăтланса, нимĕçсем виçĕ хутчен контратака тунă. Анчах та совет боецĕсем çĕнĕ позицисем çинче хытă çирĕпленсе ларнă, гитлеровецсен пур контратакисене те сирсе янă, тăшмана пысăк çухату тӳстернĕ. Тыткăна илнисем пур, вĕсен шутĕнче пĕр нимĕç ротин командирĕ.

* * *

Çурçĕр флочĕн авиацийĕпе торпеда катерĕсем Варангер фиордĕнче тăшманăн тральщикне, хăй тĕллĕн çӳрекен баржине тата икĕ пин тонна таякан транспортне шыва путарнă.

ОКТЯБРЬ УЯВĔ УМĔНХИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ

Вăрман касакансем ĕç тухăçне ӳстереççĕ

ВĂРНАР, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри предприятисемпе учрежденисенче уяв умĕнхи ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Рабочисемпе работницăсем, хăйсем илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешсе, çĕнĕ çитĕнӳсем тăваççĕ. Вăрманпромхозри Яшин мастерăн участокĕнчи работницăсем М. Сорокинăпа Е. Запасова юлташсем юлашки вăхăтра ĕç тухăçлăхне нумай ӳстерчĕç. Вĕсем куллен 3,5 кубометр вутă хатĕрлес вырăнне 5—6 кубометр хатĕрлеççĕ. Ăмăртура малта пынăшăн вĕсене вăрманпромхозри куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава панă.

Вăрман хуçалăхĕнче те стахановла ĕçлекенсен йышĕ ӳссе пырать. Иванов мастерăн участокĕнчи Захаровăпа Степанова юлташсем ăмăртăва хутшăннă хыççăн нормăна 200-шер процент таран тултарма пуçларĕç.

Районри апат-çимĕç комбиначĕпе промкомбинат коллективĕсем те аслă уява çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ.

В. ШАХАЛОВ.

Слесарьсен çитĕнĕвĕ

КУСЛАВККА, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Комбинатри Шакиров юлташ профорг пулса ĕçлекен цехри слесарьсен ушкăнĕ, уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, ĕç тухăçлăхне ӳстерме сăмах пачĕ. Вĕсем хăйсен сăмахне малтанхи кунсенчех пурнăçа кĕртме тытăнчĕç. Слесарьсем Шиликов, Михайлов, Козырев, Иванов, Тухватуллин юлташсем ĕç тухăçлăхне куллен ӳстерсе пыраççĕ. Слесарь Майоров юлташ халĕ кулленхи нормăна 400 процент тултарать.

Слесарьсемпе ăмăртса ĕçлекен сварщиксем те кая юлмаççĕ. Кормилицын, Коклин тата ытти нумай юлташсем ĕç нормине яланах ирттерсе тултараççĕ. Сварщик Розин юлташ куллен икĕ норма тултарать.

В. КАРПОВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Коммуналлă хуçалăх предприятийĕсен ăмăртăвĕн 1944 çулхи август уйăхĕнчи итогĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕ, коммуналлă хуçалăх предприятийĕсен ăмăртăвĕн август уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, ăмăртура Канашри Колхозник çурчĕ (заведующийĕ Паторов юлташ) мала тухнă тесе йышăннă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Канашри Колхозник çуртĕнчех хăвармалла тунă тата ăна ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 5.000 тенкĕ укçа панă.

Август уйăхĕнче Улатăрти гостиница хăйĕн ĕçне лайăхлатнине палăртнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕ, юлашки вăхăтра коммуналлă мунчасем, парикмахерскисем тата хула совечĕсен пурăнмалли çуртйĕр управленийĕсем хăйсен ĕçне сӳрĕклетнине палăртса, Чăваш АССР Коммуналлă Хуçалăх Халăх Комиссарне Сорокин юлташа тата Канаш, Улатăр, Çĕмĕрле хула совет исполкомĕсен председателĕсене коммуналлă предприятисен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнма хушнă.

БОРОДИНОРИ МУЗЕЕ ЮСАСА ÇИТЕРНĔ

Бородинори вăрçăпа истори музейне фашистла нимĕç захватчикĕсем çĕмĕрсе тăкнă пулнă. Ăна халь юсаса çитернĕ. Музейĕн çуртне ĕлĕкхи евĕрлех туса хунă. Чи хаклă экспонатсене — Кутузов лавне, вырăс çарĕн 1812 çулхи отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи хĕçпăшалĕсемпе тумтирĕсене, паллă мастерсен картинисене, гравюрисене, Бородино хирĕнчи çапăçура пулнă çынсен портречĕсене — куçарса кайнă çĕртен каялла илсе килсе, музее вырнаçтарса лартнă.

Музейре халь япаласем нумайланнă. Унта 1941—1942 çулсенче Мускавшăн пынă çапăçăвăн чи палăрса тăракан тапхăрĕсене кăтартакан пай уçнă. Çав тапхăрти документсем, плансем, илемлĕ произведенисем тата трофейсем питĕ интереслĕ.

Сталинград мĕнле пулать

Фашистла нимĕç захватчикĕсем ишĕлтернĕ хуласемпе ялсене юсанă çĕре пĕтĕм совет халăхĕ хутшăнса ĕçлет.

Архитекторсемпе строительсем умĕнче питех те ответлă задача — ишĕлтернĕ хуласемпе ялсен вырăнĕсенче вăрçăччен хинчен илемлĕрех хуласемпе ялсем туса лартас задача тăрать. Çак ĕçе хăвăрт, йӳнĕ хакпа туса, техникăн юлашки çитĕнĕвĕсене пăхăнса пырса, строительство материалĕсен вырăнти пуянлăхĕсемпе анлăн усă курса, пурнăça кĕртмелле.

Архитектура академийĕн мастерскойĕ Сталинград хулине юсас тĕлĕшпе тунă проектсенче те çав тĕллевсем тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ. Проектсене тунă чухне эпир çутçанталăк условийĕсене, хула пулмалли вырăна тĕплĕн шута илтĕмĕр. Çавăн пекех тата строительство валли вырăнта пур материалсене, строительство материалĕсем тăвакан хула çывăхĕнчи предприятисене тĕплĕн тĕрĕслесе тухрăмăр. Çаксем пире Сталинграда юсас тĕлĕшпе малтанхи черетре тумалли ĕçсен проектне кĕске срокра туса хатĕрлеме тата ăна вăхăтра пурнăça кĕртме тытăнма май пачĕç.

Сталинград мĕнле пулать-ха?

* * *

Сталинград, ăна фашистла нимĕç захватчикĕсем ишĕлтериччен, индустриллĕ пысăк центр тата юханшыв хĕрринчи хула пулнă. Атăл тăрăх темиçе вунă километр хушшинче çуртйĕрсем ларса тухнă пулнă. Нумай площадьсем, бульварсем тата скверсем анлă шывăн пахалăхĕпе пĕрлешни хулана хăйне майлă илемлĕх кӳнĕ.

Çĕнĕ Сталинградăн проектне тăвакансем умне йывăр задачăсем тухса тăнă. Пĕрремĕшĕнчен, хулара çутăпа сывлăш, ӳсентăрансем нумайрах пулмалла тунй тата хулана шыв хĕрринерех çывхартни кирлĕ пулнă. Иккĕмĕшĕнчен, хула планĕнче, çуртсене тунă çĕрте, Атăл çинчи никам çĕнтерейми хулан историне, унăн иртнĕ вăхăтри паха енĕсене палăртмалла пулнă.

Мастерской проекчĕ тăрăх, пулас Сталинградăн сăн-сăпачĕ çакăн пек пулмалла: Атăл тăрăх гранит сарса тухнă, йывăç-курăксем нумай ӳсекен, чаплă çуртсемпе тата Сталинград патĕнчи çапăçусен ячĕпе тунă скульптурăллă статуйăсемпе илемлетнĕ паха бульвар тăсăлса выртать. Хулари çуртсене Атăл хĕрринчен çӳлелле, терасăсемпе туса лартмалла. Çакă вăл хулан кирек хăш пайĕнчен те шыв хĕрринчи илемлĕ вырăнсене, вырăссен аслă шывĕн тикĕс талккишне курма тата çавăн пекех шыв хĕрринчен хулари художествăллă çуртсене курма май парать.

Шыв хĕрринчи урам пĕтĕм хула тăрăх тата рабочисен поселокĕсем тăрăх иртсе пырать. Хальхи вăхăтра Атăл хĕррине илемсĕрлĕкен чугун çулсене урăх вырăна куçараççĕ. Атăл хĕрринчи урам варринче Мухтав площадьне тума палăртнă. Вăл оборона музейĕн паха çуртĕпе илемленет. Çав çуртра Сталинград патĕнчи çапăçусенче илнĕ трофейсене пăхса усрамалла пулать.

Площадьре Царицынпа Сталинграда хӳтĕлесе хăварнă геройсен ячĕпе художествăллă аслă памятник пулать. Вăл памятник пур çĕртен те курăнмалла пулать, вăл кашниннех çак аслă хулан геройлăхне, ăна хӳтĕлекенсен паттăрлăхне тата мухтавлăхне аса илтерĕ.

Шыв хĕрринчи урамра Атăл патне тата пристаньсемпе вокзалсем патне анмалли илемлĕ пусмасем пулаççĕ. Унтах юханшыв флотилийĕ тата Родимцев генерал гвардеецĕсен мухтавлă кĕрешĕвне аса илтерекен памятниксем пулмалла. Шыв хĕрринчи урамран çӳлерех унпа юнашар тепĕр магистраль — йывăç-курăксем нумай ӳсекен бульвар тăсăлса выртать. Унта административлă тата культура учрежденийĕсен, банксен, театрсен çурчĕсем пулаççĕ.

Хулан вăтаçĕрти пайĕнче пĕр-пĕринпе аллейăсемпе çыхăнакан площадьсем нумай пулаççĕ. «Сталинград геройĕсен аллейи» Мухтав площадьне Царицын хулине 1918 çулта хӳтĕленине кăтартакан площадьпе çыхăнтарать. Çав площадьре Советсен çурчĕ тата паттăррăн çапăçса вилнĕ геройсен ячĕпе памятниксем пулаççĕ. Паттăррăн çапăçса вилнĕ геройсен площачĕпе геройсен аллейи пĕрлешнĕ çĕрте Сталинград патĕнчи çĕнтерĕве кăтартакан аркă (хапха) пулать.

Аллейăсемпе садсем, скверсем, бульварсем, парксем пĕтĕм хулана ешĕрсе ӳсекен йывăç-курăксен илемĕпе витеççĕ.

Парксем Пионерка юханшывăн айлăмĕнче тата Мамаев Курган тăвайккийĕсенче те пулаççĕ. Курган çинче Сталинград патĕнчи çапăçусене кăтартакан панорама пулать.

* * *

Çулсем иртĕç, анчах та Атăл çинчи аслă хула стенисем патĕнче пулнă историллĕ çапăçусене пирĕн çĕршыври тата пĕтĕм тĕнчери халăхсем нихăçан та манмĕç. Сталинград — паттăрлăхăн палли тата совет çыннисем хăйсен тăван çĕршывне вĕçĕмсĕр юратнине кăтартаканни пулса тăрать. Пĕтĕм çĕр чăмăрĕ çинчи пур кĕтессенчен те нихăçан сӳнми мухтавлăхпа витĕннĕ хулана хăйсен куçĕпе курма экскурсантсем пухăнĕç.

Сталинграда, унăн архитектурăллă сăнсăпатне вăрçăн геройла тапхăрне кăтартакан, аслă вырăс халăхĕн хăвачĕпе пултарулăхне кăтартакан аслă памятник пек тумалла. Çавăн пек пулать те ĕнтĕ вăл.

Академик К. АЛАБЯН.

МОЛДАВАН ССР-ĔН СТОЛИЦИНЧЕ ПУРНĂÇ ÇĔНЕРЕН ПУÇЛАНСА КАЯТЬ

Оккупантсем Молдаван ССР-ĕн столицинче — Кишинев хулинче — виçĕ çул ытла хуçаланса пурăннă. Вĕсем хулари мĕнпур предприятисене, электростанцие, трамвая, водопровода çĕмĕрсе хăварнă.

Кишинев хулине оккупантсенчен ирĕке кăларнă хыççăн ĕççыннисем хăйсен столицине юсаса ура çине тăратма пĕтĕм вăйпа тытăннă. Пĕр уйăх хушшинче вĕсем 800 çурта яхăн юсаса пĕтернĕ, урамсене ванчăксенчен, çĕмрĕксенчен тасатнă. Халь электростанцие майлаштарса çитереççĕ, трамвая юсаççĕ.

Хулара çакăр завочĕсем ĕçлеççĕ, 33 апат-çимĕç магазинĕ, 2 поликлиника, 2 больница тата васкавлă медицина пулăшăвĕн пунктне уçнă. Мускавра тухакан хаçатсене тата унтан яракан çырусене вăхăтра илсе çитереççĕ. Çак эрнере халăха электричество çути тата шыв пама пуçлаççĕ. Шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленеççĕ. (ТАСС).

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

ШЕФА ИЛНĔ ГОСПИТАЛЕ — АПАТ-ÇИМĔÇСЕМ

Çĕрпӳ районĕнчи чылай колхозсем шефа илнĕ госпиталь валли парнесем пухма тытăннă. Ку таранччен пурĕ 30 килограмм ытла аш-какай, 20 килограмм таран çу, 60 килограмм çăнăх тата темиçе вунă килограмм сухан, купăста пухса панă. Çак пархатарлă ĕçре «Новая жизнь», «Луч», «Пожанар», «Красный флаг» колхозсем уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

ДОПРИЗЫВНИКСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔ

Шăхасан районĕнче допризывниксен конференцийĕ пулса иртнĕ. Конференци призыва хатĕрленес ĕç çинчен сӳтсе явнă. Конференци хыççăн граната ывăтас, 500 метра чупас тĕлĕшпе ăмăрту пулнă. Ăмăртура допризывниксем Н. Егоров, А. Яковлев, И. Данилов, В. Степанов, Аввакумов, Иванов тата ытти юлташсем мала тухнă.

ЭЛЕКТРОСТАНЦИ КОЛХОЗСЕНЕ ПУЛĂШАТЬ

Куславкка районĕнчи Аслă Куснарти гидроэлектростанци коллективĕ кăçал электричество вăйĕпе ялхуçалăх ĕçĕсенче усă курассине йĕркелерĕ. Тăватă колхозра моторсем лартнă. Çав моторсемпе авăн çапнă çĕрте усă курса, кашни колхозрах кунсерен 6-шар тонна ытла тырă çапса кăларнă. Çакна пула вара колхозсем тĕштырăсене кĕске вăхăтра çапса пĕтерме пултарчĕç.

ВЫЛЯВ УКÇИ 285.700 ТЕНКĔ ТӲЛЕНĔ

Вăрнар районĕнчи перекет касси кăçал 8 уйăх хушшинче выляв укçисем—заемсен облигацийĕсем тăрăх 165.000 тенкĕ, укçапа япаласен билечĕсем тăрăх 120.700 тенкĕ тӳленĕ.

Болгари Венгрипе дипломатиллĕ çыхăну тытма пăрахнă

СОФИЯ, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Софири радио пĕлтернĕ тăрăх, Болгари правительстви хăйĕн Будапештри посланникне Венгри правительствине çапла пĕлтерме хушнă: Болгари Венгрипе дипломатиллĕ çыхăну тытма пăрахать.

РУМЫНИРЕ ПУРĂНАКАН НИМĔÇСЕН ГИТЛЕР МАЙЛĂ ĔÇЛЕКЕН ОРГАНИЗАЦИНЕ САЛАТСА ЯНĂ

БУХАРЕСТ, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). «Универсул» хаçатра юстици министерствин декретне пичетлесе кăларнă. Декретра Румынире пурăнакан нимĕçсен Гитлер майлă ĕçлекен организацине салатса ярасси çинчен каланă.

Декретра тата çакна кăтартса панă: Германи çарĕнче тăнă нимĕçсем Румыни гражданĕ пулма пултараймаççĕ. Çавăн пек нимĕçсен пурлăхне туртса илмелле, тенĕ.

НИМĔÇСЕН ФРАНК «ГЕНЕРАЛ-ГУБЕРНАТОРНЕ» ВĔЛЕРМЕ ТАПĂННИ

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Афтонбладет» хаçат çапла пĕлтерет: сентябрĕн 22-мĕшĕнче Краков хулинче нимĕçсен «генерал-губернаторне» Франка тапăннă. Польша партизанĕсем вăл ларса пыракан автомобиле пăшалпа пенĕ. Франк хăй аманман, анчах та унпа пĕрле пулнă Бауэр, Краковри суд председателĕ, йывăр аманнă.

НЕЛЬСОН КИТАЙРАН ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕНЕ ТАВРĂННĂ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, унта Чунцинран çар производстви управленийĕн председателĕ Нельсон таврăннă. Пĕр официальнăй представитель çапла каланă: Нельсон вăл Чан Кай-шие вăрçа активлăнрах хутшăнма сĕннĕ. Чан Кай-ши çав сĕнĕве йышăннă. Нельсон кăçалах Китая тепĕр хут кайса килме шутлать.

Итали çинчен Черчилльпе Рузвельт пĕрле калани

ЛОНДОН, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви ĕнер каçхине Черчилльпе Рузвельт Итали çинчен пĕрле каланине пичетлесе кăларнă.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви пĕлтернинче çапла каланă:

Президентпа премьер-министр Европăри вăрçă хыççăнхи политикăпа çыхăнса тăракан ыйтусене Гайд-Паркра малалла сӳтсе-явнă. Çав калаçусен результачĕсем çинчен, стратегипе вăрçă тĕлĕшĕнчи сăлтавсем пирки тата вĕсене хамăрăн ытти союзниксем пăхса тухиччен халăха пĕлтерме çук. Калаçура çавăн пекех тата хальхи вăхăтра Итали тĕлĕшпе тăракан ыйтусене те сӳтсе-явнă, ку тĕлĕшпе президентпа премьер-министр çакăн пек пĕлтернĕ:

«Фашистла тата нацистла пусмăрлăхран ирĕке кăларнă Итали халăхĕ иртнĕ 12 уйăх хушшинче хăй ирĕклĕхшĕн тăнине, мирпе тĕрĕслĕх принципĕсене парăннă пĕрлешӳллĕ нацисем хушшинче хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне йышăнас тесе, демократи енне тăрса кĕрешме хатĕр пулнине кăтартса пачĕ. Итали çĕршывне политика тĕлĕшĕнчен ура çине тăратассишĕн тата Италири фашистла системăна пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкассишĕн кĕрешекен итальянецсене эпир ырлама тивĕçлĕ. Хамăрăн пĕр тăшмана çапса аркатас ĕçе эпир итальянецсене ыгларах хутшăнма май туса парасшăн. Америкăпа Англи халăхĕсем нумаях пулмасть Римра пулса иртнĕ самосудшăн, паллах, пăшăрханаççĕ, анчах вĕсем Итали халăхĕпе унăн правительствин ответлăхне ӳстерни малашне çавăн пек ĕçсем пулассинчен сыхланса юлма май парĕ тесе шутлаççĕ. Итальянецсен администрацине хăйĕн çĕршывне контроль туса тăма ытларах май парса пырăпăр, çакна ăна, паллах, çав администраци хăй закона йĕркене тытса тăма тата суд ĕçне тĕрĕс туса пыма пултарнине кăтартса парсан çеç пурнăçа кĕртме май пулать. Çав улшăнăва палăртас майпа Союзниксен контроль комиссине Союзниксен комиссийĕ тесе чĕнмелле тунă. Британин Италири верховнăй комиссарне вара посол ятне панă.

Америкăн Римри представителĕн çав ранг пур ĕнтĕ.

Итали правительствине Вашингтонпа Лондон хулисене хăйĕн представителĕсене яма чĕннĕ.

Итали тĕлĕшпе пуринчен малтан тата халех сӳтсе-явма тивĕçлĕ ыйтусем вĕсем —выçлăхпа, ерекен чирсемпе тата хăранипе кĕрешес ыйтусем пулса тăраççĕ. Çав шутпа эпир пĕрлешнĕ нацисене пулăшас тата вĕсене ура çине тăратас тĕлĕшпе ĕçлекен администраци Совечĕн (ЮНРРА) конференцийĕнчи хамăрăн представительсене Италие медицина пулăшăвĕ тата ытти кирлĕ таварсем ярассишĕн тухса калама кăтарту патăмăр. Çав шухăша Советăн ытти членĕсем ырласа кĕтсе илни çинчен калакан хыпара эпир кăмăлласа йышăнтăмăр.

Çакăнпа пĕрлех Итали экономикине ура çине тăратас тĕлĕшпе те малтанхи утăмсене тумалла. Çав экономика влаçа Муссолини тытса пынă çулсенче питĕ япăхса кайнă. Германи, хăйĕн тавăрас политикине тытса пырса, мĕнпур запассене çаратса пĕтернĕ. Экономикăна юсас тĕлĕшпе тума тивĕçлĕ çав утăмсене, чăн малтан, вăрçă тĕллевĕсене пурнăçа кĕртес шутпа тумалла. Италин тата Итали халăхĕн мĕнпур ресурсĕсемпе Германипе Японие çапса аркатассишĕн пыракан кĕрешӳре усă курмалла тăвас пулать. Вăрçă ĕçĕсене кура, пирĕн итальянецсене вĕсен чугун çулĕсен, автотранспорчĕн, шоссе çулĕсемпе ытти тĕрлĕ çулйĕрĕсен хăватлă системине вăрçă вăхăчĕ хушнă пек йĕркелесе ура çине тăратас ĕçре пулăшмалла. Кĕске вăхăтрах пирĕн, Итали хуçалăхне юсама пулăшас шутпа, унта инженерсемпе техниксене тата промышленность эксперчĕсене ямалла. Итали тĕлĕшпе ăна тăшманла çĕршыв вырăнне хурса тытакан законсене улăштармалла пулать. Çакна ăна Итали халăхĕн интересĕсемшĕн, Италипе ĕçлĕ тата тулашри çыхăнусене юсаса ура çине тăратас шутпа, çавăн пек туса ирттермелле.

Италире фашизмăн юлашкийĕсем пĕтес кун, юлашки нимĕç Итали çĕрĕ çинчен тухса каяс кун, унта союзниксен мĕнле те пулин çарĕсене тытса тăма пăрахас кун, çапла вара мĕнпур Италире ирĕклĕ суйлавсем туса ирттерес тата Итали ирĕклĕ нацисем хушшинче хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне йышăнма пултарас кун çитессине эпир пурте пĕтĕм чун-чĕререн васкатма тăрăшатпăр».

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ сентябрĕн 26-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Эйндгофен хулипе Неймеген хули хушшине савăлланса кĕнĕ районра союзниксен çарĕсем хĕвелтухăçнелле куçнă, халăх пурăнакан Гельмонд тата Дерне пункчĕсене туртса илнĕ те çав пунктсенчен темиçе миля çурçĕрелле кайнă. Тернгаут хулинчен хĕвеланăçнерехре Антверпен хулипе Тернгаут хули хушшинчи канал çинче союзниксен çарĕсем тăшмана тапăнма укреплени тунă. Аахен хулинчен çурçĕрелле Мерт шывĕн улăхне çитиччен паллă улшăнусемех пулман. Мозель шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Эпиналь хулине пĕтĕмĕшпех ирĕке кăларнă, унтан темиçе миля малалла кайнă. Бельфор хулинчен хĕвеланăçнерехре союзниксен бронетанковăй тата пехотнăй чаçĕсем, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, темиçе миля малалла кайнă.

Союзниксен авиацийĕ сентябрĕн 25-мĕшĕнче Арнгем районĕнчи артиллери позицийĕсемпе укрепленийĕсене тапăннă.

Йывăр бомбардировщиксем тăшманăн Кале хулинчи çирĕплетнĕ позицийĕсем çине 1.000 тонна ытла фугаслă бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ сентябрĕн 26-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем Мареккиа шывĕпе Рубикон шывĕ хушшинчи çĕре тăшмантан тасатнă. тăшман вăйлă хирĕç тăнине çĕмĕре-çĕмĕре, Рубикон шывĕ урлă темиçе каçă хывнă.

Американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем Палаццуоло тата Маррада хулисене туртса илнĕ, çавăн пекех тата çывăхри темиçе паха çӳллĕ вырăна йышăннă.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи авиацийĕ 750 вĕçеве яхăн тунă.

* * *

ЛОНДОН, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ сентябрĕн 27-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Тăшман, союзниксен Эйндгофен хулипе Неймеген хули хушшинчи çулйĕрĕсене туртса илме хăтланса, атакăсем тунă, çав атакăсене пурне те сирсе янă. Маас шывĕн Боксмер хулинчен кăнтăртарахра выртакан 5 миля тăршшĕ участокĕ союзниксен аллинче тăрать.

Союзниксем хăйсем савăлланса кĕнĕ участокăн никĕсĕнче икĕ енĕпе те çитĕнӳсем тунă. Хĕвеланăç енче союзниксен çарĕсем Антверпенпа Гернгаут хушшинчи канал çине чылай анлă тăрăхра пырса тухнă. Хĕвелтухăç енче, Месейк хули районĕнче, Вессем хулипе Дильсен хули хушшинче союзниксем Маас шывĕн хĕвеланăç хĕррине хăйсем контроллесе тăраççĕ.

Унтан кăнтăралла Люневиль хули патне çитиччен патрульсем хаюллă кĕрешнĕ. Союзниксен позицийĕсенче паллă улшăнусемех пулман. Штольберг хулипе Аахен хули районĕнче тăшман артиллерийĕ вăтамăн персе тăнă.

Люксембург герцогствин кăнтăр пайĕнче союзниксем Грейвельдинген хулине туртса илнĕ. Нанси хулинчен хĕвелтухăçнерехре Марсал хули çывăхĕнче тăшман контратакăсем тунă, вĕсене пурне те союзниксем сирсе янă. Мерт шывĕ улăхĕнче тăшман артиллерийĕ вăйлăн персе тăнă. Эпиналь хулинчен çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем Мозель шывĕ урлă каçса кайнă та Шатель-сюр-Мозель хулине тата унтан кăнтăртарахра темиçе хула туртса илнĕ. Доселль хулипе Тендон хули районĕнче тăшман хытă хирĕç тăрать, союзниксене Эпиналь хулинчен хĕвелтухăçнелле куçса пыма чăрмантарма хăтланать.

Тинĕс хĕрринче çĕр çинчи çарсем Кале хулине хирĕç çапăçаççĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн вăрçă объекчĕсене тата унăн транспортне пырапыра тапăннă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 38 самолетне персе ӳкернĕ.

ЛОНДОН, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ сентябрĕн 27-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Сентябрĕн 16-мĕшĕнчен пуçласа, союзниксем Далмацин кăнтăр çыранĕ патĕнчи утравсем çине çарсем антарнă. Çав вăхăтрах партизансем каялла чакакан нимĕçсене татти-сыпписĕр тапăннă. Союзниксен çарĕсем çавăн пекех тата Албани çĕрĕ çине те аннă. Карапсем çинчен антарнă чаçсем тата парашютсемпе аннă чаçсем тăшманпа Адриатика тинĕсĕн анлă фронтĕнче —Албанире тата Югослави çыранĕсем хĕрринчи утравсем çинче çапăçаççĕ. Союзниксен Балканри авиацийĕ кунти çарсене тăшманпа çапăçма пулăшса тăрать.

Италире 8-мĕш арми чаçĕсем Рубикон шывĕнчен кăнтăртарахра тăшман хирĕç тăнине пĕтерсе лартнă. Халĕ 8-мĕш арми чаçĕсем Беллари хулипе юнашар ларакан ялсене кĕрсе кайнă. Ку секторăн сулахай флангĕнче Англи çарĕсем вăйлă çапăçнă хыççăн Рубикон шывĕн çурçĕр хĕрринче тăшмана тапăнма тунă хăйсен укреплениине аслăлатнă, халĕ вĕсем Савиньяно хули патне çывхарса пыраççĕ. Вăтаçĕрти секторта американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, кăштах малалла кайнă.

Союзниксен авиацийĕпе флочĕ тăшманăн вăрçă объекчĕсем çине пенĕ.

Югославири çапăçусем

ЮГОСЛАВИ ХАЛĂХĔН ИРĔКЛĔХ ÇАРĔН ÇĔНĔ ÇĔНТЕРĔВĔ

КАИР, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). «Çĕнĕ Югослави» (ТАНЮГ) ятлă телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ ятарласа уйрăм пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Пĕлтерӳре çапла каланă: 5 кун хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн Югослави çарĕсем Боснире Банья-Лука хулине туртса илнĕ. Ку хула Боснин халăх чи нумай пурăнакан иккĕмĕш пысăк хули пулса тăрать. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 3.000 виллине çити выртса юлнă. Югослави чаçĕсем тăшманăн 4.000 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Тыткăна илнисем хушшинче нимĕçсен 69-мĕш дивизи командирĕ Генитц генерал тата павеличевецсен 3-мĕш горно-стрелковăй бригадин командирĕ Милетич полковник пур.

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтерет:

Хĕвеланăç Сербире Югослави чаçĕсем, наступление вăйлатса пырса, Любовия хулине туртса илнĕ. Крагуевац хулинчен кăнтăртарахра Михайловичăн 4 «корпусне» аркатса тăкнă. Хĕвелтухăç Сербире хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Далмацире Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем вăйлă çирĕплетнĕ Шодта тата Друзеник утравĕсене туртса илнĕ. Çапла ĕнтĕ, Далмацин вăтаçĕрти утравĕсене пурне те тăшмантан тасатнă. Ирĕке кăларнă утравсем çинчен Югослави çарĕн артиллерийĕ халь Далмаци çыранĕ çине персе тăрать. Шиоеник хулинчен хĕвелтухăçнерехре Югослави чаçĕсем тăшманăн паха тĕреклетнĕ пункчĕ пулса тăракан Перковичи чугун çул узелне туртса илнĕ. Равни округĕнче нимĕçсен вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсем пулса тăракан Смоквич тата Височане ялĕсене туртса илнĕ. Пелешац çурутравĕ çинче тăшманăн Стон ятлă паха тĕреклетнĕ пуктне туртса илнĕ, çав пункт çурутрав çине пырса кĕмелли çулсене хӳтĕлесе тăрать.

Ликăри Югослави чаçĕсем наступление вăйлатса пынă, Перушич, Марина Глава тата Лесце ятлă çирĕплетнĕ пунктсене туртса илнĕ. Çапла вара, тăшманăн Çурçĕр Адриатика районĕнчи икĕ группировки хушшинчи çыхăнăва татнă.

НЕДИЧ, ПАВЕЛИЧ ТАТА МИХАЙЛОВИЧ ÇАРĔСЕМ АРКАНСА ПЫРАÇÇĔ

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). «Ирĕклĕ Югослави» ятлă радиостанци пĕлтернĕ тăрăх, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕ енне сербсемпе хорватсем пинĕ-пинĕпе куçаççĕ, вĕсене Недичпа Павелич çарĕсене тата четниксен отрячĕсене ирĕксĕр мобилизациленĕ пулнă. Чылай вырăнсенче Югослави çарĕсем енне домобранецсен гарнизонĕсем пĕтĕмĕшпех куçаççĕ. Çапла, Сремра Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕ енне тăшманăн 6.000 салтакĕпе 115 офицерĕ куçнă, вĕсемпе пĕрле Сремри полкăн командирĕ те куçнă. Сербири четниксемпе недичевецсем хушшинче те вăйлă пăтрашу пырать. Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕ енне недичевецсем йышлăн куçнă. Вĕсене Недичăн чикĕри хурал пуçлăхĕ Стеванович ертсе пынă.

Павеличпа унăн шайкки, хăйĕн «çарне» ишĕлесрен чарса лартма хăтланса, çынсене хаяр наказанисем параççĕ. Анчах та наказанисем ĕçе тӳрлетме пулăшмаççĕ ĕнтĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: американецсен 1.100 ытла йывăр бомбардировщикĕ Оснабрюк, Гамм тата Бремен хулисене тапăннă.

Англи бомбардировщикĕсем тăшманăн чикĕре ларакан Гох хули районĕнчи çулйĕрĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Сывлăшран ӳкерсе илнĕ фотоӳкерчĕксем кăтартнă тăрăх, союзниксен авиацийĕ тапăннине пула, Германин чи паха тинĕсçар базин пулса тăракан Килĕн виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕ ишĕлсе пĕтнĕ е вăйлă сиен тӳснĕ.

ЛОНДОН, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра çапла пĕлтернĕ: американецсен «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши 1.100 бомбардировщикĕ ытла, питĕ йышлă истребительсем хӳтĕлесе пынипе, сентябрĕн 27-мĕшĕнче ирхине Хĕвеланăç Германири чугун çул деповĕсене тата вăрçăпа промышленность объекчĕсене тапăннă.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ МАНЧЖУРИЕ ТАПĂННĂ

ЛОНДОН, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Вашингтон хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министерстви çапла каланă: американецсен «Вĕçекен крепость» йышши бомбардировщикĕсем паян Манчжурири стратеги объекчĕсене тапăннă, тенĕ.

ХРОНИКА

** Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ Г. М. Никитин юлташа, вăл урăх ĕçе куçнă май, Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссарĕн ĕçĕсенчен хăтарнă.

** Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ П. С. Меценатова юлташа Чăваш АССР Социальнăй Обеспечени Халăх Комиссарĕн ĕçĕсенчен хăтарнă.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Ывăлĕшĕн

Натали аппа хăйĕн 60 çул ытла пурăнса ирттернĕ кунçулĕнче пурĕ те юлашки 10—15 çул хушшинче кăна тулли пурнăç курнă тесе асăнать. Вăл, хăйĕн икĕ куçне пăхнă пек пăхса, икĕ ывăл çитĕнтернĕ, вĕрентсе ăс панă вĕсене. Час-часах Натали аппа хăй пек ватăсем хушшинче хăмăш пек яштака та çирĕп ывăлĕсемпе мухтаннă. Ватăлмалăх кунра çăкăр çитерекенсем пурришĕн савăннă, хăш чухне вара хăйне пулăшма кин тупасси çинчен те шутланă.

— Пурте çитетчĕ, çиме те, ĕçме те, тумланма та пурччĕ,—тет Натали аппа.

Анчах, нимĕç вăрă-хурахĕсем пирĕн çĕршыв çине тапăнсан, Натали аппа ял вĕçĕнчи урамра ларакан пĕчĕк те тирпейлĕ пӳрте пĕччененех тăрса юлнă. Унăн икĕ ывăлĕ те вăрçă хирне тухса кайнă. Натали аппан ватă куçĕсенчен час-часах куççуль юхнă. Вăл вара куллен: хаяр тăшмана аркатса тăкма хамăр çĕршыва вăй-хăват пар, çарăн хĕçĕ çивĕч пултăр, тăшманăн хĕрӳ çапăçура хĕçĕ вантăр, — тесе кĕл тунă. Ывăлăмсем паттăр пулччăр, вĕсен сывлăхĕ тимĕр пек çирĕп пултăр, сивĕре те ан шăнччăр, шăрăхра та ан ĕшенччĕр, — тенĕ вăл.

Ывăлĕсем тăшманпа виçĕ çул хушши çапăçнă. Натали аппа вĕсенчен çырусем илсе тăнă. Çырусене вăл хăй вулама пĕлмен, анчах вĕсенче темле чĕрене йăпатакан ăшă япала пур пек туйăннă. Пĕр-пĕр кун çĕнĕ çыру илсен, ăна вăл нумайччен тытса, таран шухăша кайса ларнă, тахçан пулнă ĕçсене аса илнĕ. Çывăрма выртсан вара, çырăва минтер айне хурса выртнă. Çыру илнĕ хыççăн, ялан тенĕ пекех, ырă тĕлĕксем курса йăпаннă. Çапла иртнĕ вăрçăллă икĕ çул.

Кăçал çĕнĕ çулăн малтанхи кунĕсенче Натали аппана нумай марка çыпăçтарнă çыру кӳрсе панă. Çырăва илсен вăл, яланхи пекех, вуласа паракан киличчен кăкăрĕ çумне чиксе усранă: кăкăр сĕчĕ тăван йăвана çавăрса килтĕр, — тенĕ-çке ха мĕн авалтан ваттисем.

Çырăва вулама тытăнсан, конверт ăшĕнчен пĕчĕк фотокарточка тухнă. Карточкăран Хĕлип ятлă ывăлĕ çавракан хура куçĕпе ун çине пăхса тăнă. Натали аппа сăн ӳкерчĕкĕ çинчен нумайччен куçне илмен, куçĕ тĕтреленсе килнĕ, савăнăç куççулĕ, пĕркеленнĕ пичĕ тăрăх юхса анса, карточка çине тумланнă. Вăл, ывăлĕн сăнне чуптуса, хăйĕн тăварлă куççулне тутаннă. Çырура нумай çырман:

«Хаклă аннем, —тесе çырнă Хĕлип, — çĕршыв пире хурçă танксем шанса пачĕ, эсĕ пире тăшмана хирĕç тăнă чухне хаяр пулма вĕрентрĕн. Çав хаярлăхпа хурçă танк ăшĕнчен тăшман çине вут-кăвар тăкса, тăван çĕршыва нимĕç текен тискер кайăксенчен тасататпăр. Эсĕ пире пăхса çитĕнтертĕн, çĕршыв ăс-тăн, ырă пурнăç пачĕ. Санăн ватăлăху канлĕ пултăр тесе, тăван çĕршыв вăрçăчченхи пекех чечеклентĕр тесе, паян акă çапăçăва кĕретпĕр. Сывă пул. Асăнмалăх сана, аннем, хам сăнăма яратăп.

Чунтан юратакан санăн ывăлу Хĕлип.

Январĕн 1-мĕшĕ, 1944 çул».

Çакăн пек чĕререн çырнă ăшă çырусем Натали аппа татах та илнĕ.

— Тĕрĕс, тăшмана çĕнтерсен çеç канлĕ ватăлăх пулĕ çав, — тесе килĕшнĕ вăл хăйĕн аслă ывăлĕпе.

Вăрăм хĕл иртсе пынă. Урам хушшинче юр кайса пĕтнĕ, канав тăрăх шăнкăртатса шыв юхнă. Колхозниксем акана хатĕрленнĕ. Çуркуннехи хĕвел ăшшине тухса ларса, Натали аппа ывăлĕсенчен çыру кĕтнĕ, çыру илсе вуласан, колхоза кайса, мĕн вăй çитнĕ таран акана тухма хатĕрленнĕ çĕрте пулăшнă.

Яланхи пекех, паян та почтальон, унăн пӳртне кĕрсе, çыру парса хăварнă, яланхи пекех, Натали аппа, çырăва кăкăрĕ çумне чиксе, тăшмана çĕнтерме çĕршыва вăй пар, — тесе кĕл тунă.

Анчах çыру яланхи пек туйăнман, вăл вулама пĕлмесен те ывăлĕсен çырăвне йĕрсенчен паллама вĕреннĕ.

Çырура çапла çырнă:

«Хисеплĕ те хаклă Наталья Степановна! Сирĕн ывăлăр Филипп Николаевич пирĕнпе пĕрле тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçрĕ. Анчах юлашки çапăçура вăл тăшман салтакĕсене хăйĕн хурçă танкĕпе пĕтерсе тăкнă хыççăн йывăррăн суранланса вилчĕ. Эпир, Филипп Николаевичăн юлташĕсем, Сирĕнпе пĕрле хурланатпăр, çак йывăр хыпара мĕнле те пулин чăтса ирттерме сунатпăр.

Сирĕн ывăлăр çĕршыв умĕнче пысăк чыса тухрĕ, вăл паттăр вилĕмпе вилчĕ, пирĕн халăх ăна нихăçан та манмĕ, вăл яланах унăн чĕринче пулĕ. Правительство ăна паттăррăн çапăçнăшăн вилнĕ хыççăн Отечественнăй вăрçăн 1-мĕш степень орденĕпе наградăларĕ. Çак чаплă та пысăк наградăна Сире ярса паратпăр, хăвăр ывăлăра яланах асра тытăр. Паттăр ывăл çитĕнтернĕшĕн Сире çĕршыв ячĕпе тав тăватпăр.

Сирĕн ывăлăрăн çамрăк пурнăçĕшĕн, нимĕнле витейми Сирĕн хуйăхăршăн Эпир, танкистсем, тăшмана вĕçне çитиех тавăрăпăр тесе тупа тăватпăр.

Боецсемпе офицерсем хушнипе — танковăй чаçăн командирĕ Е. Родимцев. 21.04.44 ç.».

* * *

Наталия Степановна пире çак çыру хыççăн ывăлĕн орденне илсе кăтартрĕ.

— Ывăлăма питĕ шел, сахал мар куççуль тăкрăм. Анчах, ачамсем, вăрçă пырать, куççуль тăкнипе тăшмана çĕнтерейĕмĕн, — терĕ вăл, куçне тутăрпа шăлса.— Хĕлипĕн юлташĕсене пулăшас тесе, колхозра пикенерех ĕçлеме-шут турăм. Ывăлшăн, çĕнтерӳшĕн колхоз уйне тепĕр хут тухрăм. Манăн куççуль ахаль ан пултăр, тăшман кунçулне пӳлтĕр, ăна путлантартăр. Тăшмана çĕнтеричченех колхозра пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме сăмах патăм.

Ылттăн ордена чуп туса, вăл ăна тирпейлĕн хĕрлĕ тутăрпа чĕркерĕ те ывăлĕн юлташĕсем янă çырупа пĕрле кĕтесре ларакан арчана хучĕ.

Колхоз председателĕ П. Н. Майков юлташ каланă тăрăх, Наталья Степановна 150 ĕçкунĕ ытла тунă. Тырă вырнă çĕрте вăл çамрăксенчен пĕрре те юлса пыман.

— Ывăл ячĕшĕн, çĕршыв хăвачĕшĕн ĕçлетĕп, — тет 60 çулхи патриотка, икĕ паттăр ывăлăн амăшĕ Наталья Степановна Ефимова юлташ.

В. ЯСТРЕБОВ.

Муркаш, «Красное Сормово» колхоз.

Наталья Степановна Ефимова.

Сĕнтĕрвăрринчи фельдшер шкулĕ Шупашкара куçнă.

Вăл фельдшер отделенийĕпе акушер-фельдшер отделенийĕн 1-мĕш курсне вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Шкулта 3 çул вĕренмелле.

Шкула 16 çултан пуçласа 35 çула çитнисене, 7 çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Вĕренме кĕрес текенсен математикăпа, вырăс чĕлхипе тата Конституципе испытани тытмалла. Отличниксене испытанисĕрех илеççĕ.

Вĕренекенсене стипенди параççĕ.

Заявленисене октябрĕн 1-мĕшĕпе 5-мĕшĕ хушшинче илеççĕ. Испытани октябрĕн 5-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче пулать.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, ул. Калинина, 36.

«Чăваш Коммуни» издательствине завхоз кирлĕ. Ĕçукçи килĕшсе татăлнă тăрăх. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Дом печати, III этаж, комн. 28. Телефон 0—23.. 2—1.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР
сентябрĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа кунсеренех
«БОЛЬШАЯ ЗЕМЛЯ»
ятлă илемлĕ çĕнĕ фильм кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.
Билетсем малтанах илсе хума юрать. Касса ирхине 10 сехетрех ĕçлеме пуçлать.

Шупашкарти энергетика техникумне çакăн пек работниксем кирлĕ: курьерсем, техничкăсем, подсобнăй хуçалăх заведующийĕ, подсобнăй хуçалăх сторожĕ, нимĕç чĕлхине вĕрентекен преподаватель, столяр, кантăк лартакан, кăмака тăвакансем, слесарь, платник. Ĕçукçи—калаçса татăлнă тăрăх.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Плеханова, 7. 3—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительне секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00714. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.